С(Чув)
Щ72
243994-Чув.

# Николай
# ШЕЛЕПИ

## УКСАК ТИМĔР ПӲЛЕРЕ ИЛНИ ÇИНЧЕН

Уксак Тимĕр çарпала
Пӳлер патне çитнĕ чух
Çар пуçлăхне пурне те
Пуçтарчĕ, тет, пĕр çĕре,
Мĕнле мелпе Пӳлере
Илессине пĕлтерме.
Уксак Тимĕре çавăн чух
Қаларĕ, тет, пĕр пуçлăх:
— Пӳлер хули пит чаплă,
Таçтан-таçтан сарăлнă:
Тем тарăнăш валсемпе
Йĕри-тавра çавăрнă.
Пӳлер патши хушнипе
Валĕсене чăп-тулли
Вăрттăн тимĕр хапхаран
Шыв кăларса тултарнă.
Çавă Пӳлер хулинче
Пăлхар патши пурăнать,
Пур çĕрте те çар халăх
Вăрман пекех курăнать.
Улт-çич çухрăм хушшине
Ытканаççĕ уххисем;
Ăçта пăхсан та курăнать
Пĕлĕт пек çын юхнисем.
Вăрçса илес тесессĕн,
Пурте вилсе пĕтĕпĕр,
Тем пек чаплă çар ятне
Намăспа çеç витĕпĕр.
Акă кунта пĕр ялта
Пĕр пит чаплă асамăç
Чăваш карчăк пурăнать.
Çĕрле вĕçсе çӳрет, тет,
Мĕлке çине утланса,

Шуйттансемпе пĕр пулса,
Темĕн те пĕр хăтланса,
Çӳçне-пуçне тустарса,
Çӳле вĕçсе хăпарса,
Пĕкĕрĕлсе, хутланса,
Уйăх çиме хапсăнса.
Вупăр пулса пусать, тет,
Çывăракан çынсене;
Витĕр пĕлсе тăрать, тет,
Малашнехи кунсене.
Вĕри кĕлпе сапсассăн,
Пичĕ-куçĕ хĕп-хĕрлĕ
Хăпаланса тухать, тет.
Куçне вара алтăр пек
Чармакласа пăхать, тет.
Унтан эрни-эрнипе
Урама та тухмасть, тет.
Йытă пек те вĕрет, тет,
Кашкăр пек те улать, тет,
Шуйттансемпе туй туса,
Пĕçĕ çапса кулать, тет.
Тĕнĕрен тухса каять, тет,
Тĕнĕрен килсе кĕрет, тет,
Кунĕпеле çыврать, тет,
Çĕрĕпеле çӳрет, тет,
Мĕнле мелпе Пӳлере
Илмеллине пĕлет, тет,
Вăл карчăкран ăс ыйтма
Таçти çын та килет, тет;
Эс те çакă карчăкран
Ăс ыйтса кил, Чăн-пуç-хан,
Часрах кайса пĕл-халĕ,
Инçе мар, тет, ун ялĕ.
Çар пуçлăхĕн сăмахĕ
Каять ханăн кăмăлне.
Утланать те лашине,

Чуптарать вăл ун патне.
Ҫарчăк патне ҫитет те,
Лаша ҫинчен анать те,
Пӳрт алăкне тапать те
Хăпăл-хапăл васкаса
Ҫёрсе каять хашкаса.
Ҫарчăк ҫавă вăхăтра,
Хуран ҫинчен вир пăтти
Чашкă ҫине антарса,
Чăн-пуҫ-хана ал парса,
Сарать сётел ҫиттине,
Ҫӳрсе лартать пăттине.
Сар вир пăтти варрине
Сар ҫупала куҫ хывать.
Унтан Уксак Тимĕре
Хăна туса чыс тăвать.
Уксак Тимĕр малтанах
Вир пăттине куҫĕнчен,
Чăн варринчен, ҫу ҫинчен,
Ӑсса илсе хыпать те,
Ҫарчăк, ăна курсанах,
Сехĕрленсе хăраса,
Уксак Тимĕре сăнаса,
Ҫаларĕ, тет, уйласа:
— Уксак Тимĕр мар-и эс?
Ҫавă ҫапла куҫĕнчен,
Пăтăсене ҫу ҫинчен
Ӑсса илет, тетчĕҫĕ.

**УКСАК ТИМĔР**

Чăн калатăн эс, карчăк,
Чăнах эп ҫав пулатăп.
Хам ҫынсенчен илтнине
Ак эп сана калатăп:

Эс пит чаплă асамăç,
Сана пурте пĕлеççĕ,
Тĕнчере мĕн пуррине,
Усаллине-ыррине,
Ҫурманнине-курнине,
Пулманнине-пулнине
Пĕлсе тăрать, терĕçĕ.
Ҫаласа пар эс мана:
Ҫакă Пӳлер хулине
Мĕнле мелпе илмелле?
Ăна илем тесессĕн,
Манăн мĕн-мĕн пĕлмелле?
Чăннипеле каласан,
Санăн пуçу сыв юлĕ,
Улталаса каласан,
Пуçу халех çук пулĕ.

## КАРЧĂК

Эс, Чăн-пуç-хан, пит чаплă.
Сан çар халăх хăватлă.
Ҫапах Пӳлер хулине
Илеес çук вăйпала,
Ăна илме пултарăн
Акă çапла майпала:
Эсĕ йĕтем шăлтарса,
Серепесем хуртарса,
Унта тулă саптарса,
Ҫăвакарчăнсем тыттарса,
Урисене вĕсенне
Ăвпа кӳкĕрт çыхтарса,
Ҫаçа хирĕç пурне те
Яртар вара вĕçтерсе.
Вĕсем пурте Пӳлере
Йăвисене каяççĕ,

Вара Пӳлер хулине
Пур тӗлтен те вут хыпӗ.
Ҫапла тусан, Чӑн-пуҫ-хан,
Часах илӗн Пӳлере.

Ҫарчӑк ҫапла каласан,
Уксак Тимӗр, тав туса,
Тухса каять васкаса,
Вӑл хушнине тумашкӑн.
Мӗн илтнине, пӗлнине
Вӑл хӑвӑртах тутарать.
Акӑ, Пӳлер хулине
Вӗлт! кӑна вут хыптарать.
Акӑ, Пӳлер хулинче
Шӑри-шари хусканать,
Пӗтӗм хула халӑхӗ
Урлӑ-пирлӗ кускалать,
Патшасене ҫилленсе
Вӑрҫа-вӑрҫа ылханать,
Йӗрет, куҫҫуль юхтарать,
Хӑруш сӑмахсем калать.

## ПӲЛЕР ҪУННИ

Ах тур-тур-тур, пӗтрӗмӗр,
Ӑҫта кайса кӗрер-ши?
Ах, пӗтрӗмӗр, пӗтрӗмӗр,
Мӗскер тума пӗлер-ши?
Ыр вут ама, вут амӑш,
Ху вутна ху чарсам-и!
Ырӑ турӑ Пӳлӗхҫӗ,
Пӗр ху анчах ҫӑлсам-и!
Эх, мӗн ҫисе тӑрӑпӑр?
Мӗн-мӗн кӑна курӑпӑр?
Мӗнле майпа вилӗмрен
Чуна ҫӑлса юлӑпӑр?

Ах, хăруша, хăруша!
Пурте вилсе пĕтĕпĕр.
Ķуçпа пăхма хăруша,
Пĕтĕм тĕнче çĕмĕрлет.
Шăна-пăван вырăнне
Хисепĕ çук çын вилет.
Тăшман, тискер кайăк пек,
Никама та хĕрхенмест.
Урса кайнă пĕтĕмпех,
Ырри çинчен ним пĕлмест.
Ķапан-капан çын пусĕ
Ķупаласа хăварать,
Пĕтĕм тĕнче халăхне
Усаллăхпа хăратать.
Эх! Пӳлерĕ, Пӳлерĕ,
Часах куçран çухалчĕ.
Ав, патша çурчĕ патне те
Вут уласа çывхарчĕ.
Патша хĕрĕсем хăраса
Миçĕт тăрне тарчĕçĕ,
Йĕре-йĕре юрласа,
Ķуççуль тăкса ларчĕçĕ.
Унта та вут çитсессĕн,
Шурă акăш пулчĕç те
Çичĕ тинĕс леш енне
Вĕçсе кайрĕç виççĕш те.
Çут кĕмĕл пек çунатсем
Йăлтлатса çех юлчĕçĕ,
Пĕр куç уçса хупиччен
Курăнми те пулчĕçĕ.
Вĕçсе каяс умĕнчен
Акă çапла каларĕç:
— Эпĕр ĕнтĕ каятпăр
Çичĕ тинĕс леш енне
Кунти пирĕн çĕршыва
Тăшман килсе тулнăран.

Ахăр саман çитнĕ чух
Каллех кунта килĕпĕр.
Ку хамăрăн çĕршыва
Хамăр алла илĕпĕр.
Пирĕн ялсем, хуласем
Кунта пурте пĕтĕçĕ.
Хăшĕ турă хушнипе
Çаплах çĕре путĕçĕ.
Тĕнче пĕтес умĕнчен
Вĕсем каллех тухĕçĕ,
Унччен кунти çĕршывра
Нумай юнсем юхĕçĕ,
Малти кая юлĕçĕ,
Кайри малта пулĕçĕ.
Эх, Пӳлерĕн ырлăхĕ
Ăçта кайса кĕчĕ-ши?
Ку тискер ĕç çĕр çинче
Хăçан кăна пĕтĕ-ши?
Эх, çĕршывĕ, çĕршывĕ,
Эх, Пӳлерĕ, Пӳлерĕ,
Пĕтĕм халăх ырлăхне
Тăшмансене пиллерĕ.
Пуянлăхне, ырлăхне
Пурте пĕлсе тăратчĕ,
Унăн чапне, хăватне
Пĕтĕм тĕнче куратчĕ.
Эх, Пӳлерĕ, Пӳлерĕ,
Хĕрĕх пин алăк тетчĕçĕ,
Тасти патша халăхсем
Суту-илӳ тăватчĕç.
Сĕт-турăхсем çăвĕпех
Йӳçсе-çĕрсе laratчĕç,
Çити-çитмен вăхăтра
Пĕрне-пĕри паратчĕç.
Кĕмĕл тĕслĕ шывсенче
Хурт пек пулă вĕретчĕ,

Вăрмансенче кайăк-кăш
Кĕтӳ-кĕтӳ çӳретчĕ.
Никам татса пĕтерми
Çырла-çимĕç пулатчĕ.
Татса пĕтмен паланĕ
Çуркуннене юлатчĕ.
Шурă мамăк калпаксем
Тăхăнатчĕç пуçсене.
Тăрна куç пек тетчĕçĕ
Çăлĕсенĕн куççене.
Чăкăртатса тăратчĕç
Ытарма çук сăрансем,
Симĕс пустав халат пек
Курăнатчĕç çарансем.
Ĕшнисенче чечексем
Вутăн-хĕмĕн çунатчĕç,
Хулисемпе ялĕсем
Питĕ хăвăрт хунатчĕç.
Урхамахсем хĕлĕпех
Утă-сĕлĕ çиетчĕç,
Тĕвисенĕн çисене
Хĕрĕхшер пăт тиетчĕç.
Улăхсенче хăмлисем
Автан пуç пек пулатчĕç,
Уявсенче çамрăксем
Çĕрĕн-кунĕн вылятчĕç.
Шĕшкисенче майрисем
Хăмла пекех курнатчĕ,
Саркайăк пек савăнса
Пăлхар халăх пурнатчĕ.
Çут кĕмĕл пек çутăлса
Юхатчĕçĕ çăлĕсем,
Чĕрес-чĕрес ларатчĕç
Тăварланă çăвĕсем.
Хĕлĕн-çăвĕн пĕтместчĕ
Нӳхрепсенче шăрттанĕ,

Йăшăлтатса тăратчĕç
Çырмисенче çăрттансем.
Вĕççĕр-хĕрсĕр вырттатчĕç
Çаранлăхсем, çеремсем;
Тем чул тырпул çĕртетчĕç
Пуянĕсем-сарансем.[1]
Юр пек шурă кĕпе-йĕм
Тăхăнатчĕç çисене,
Çĕр çывăрма пĕлмесĕр
Ĕçлетчĕçĕ ĕççене.
Арман пĕвисене те
Утăпала пĕветчĕç,
Тырă-пулă тума та
Питĕ лайăх пĕлетчĕç.
Вырăссене выçă чух
Тырă парса тăратчĕç,
Пÿлер халăх хăватне
Вĕсем лайăх куратчĕç.
Тăват-пилĕк лашапа
Акалатчĕç анасем,
Чаплă Багдат хулинчен
Қилетчĕçĕ хăнасем.
Пĕр ĕçлеме тытăнсан,
Çĕрĕн-кунĕн ĕçлетчĕç,
Ĕçкĕ ĕçме тытăнсан,
Эрнипеле ĕçетчĕç.
Симпылĕсем-сăрисем
Қăпăкланса йÿçетчĕç,
Çÿлте тарай тутрисем
Вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕçетчĕç.
Қупăссене тытатчĕç,
Сĕркĕчине сĕретчĕç,
Шăпчăк юрри евĕрлĕ
Юррисене сĕветчĕç.

[1] Хытă çынсем.

Кӗслипеле тӑмрине
Харӑс тӑрса калатчӗҫ.
Ватти-вӗтти-мӗнӗпех
Вӑйӑсене саватчӗҫ.
Таҫти-таҫти халӑхсем
Киле-киле ҫӳретчӗҫ,
Мулкачсене майсенчен
Чӳчепеле пӑватчӗҫ,
Ҫамрӑкӗсем ушкӑнпе
Акӑшсем пек ҫӳретчӗҫ,
Пурҫӑнпала тӗрлесе
Тумтир илем кӳретчӗҫ.
Ырашӗсем ҫулленех
Пӗкӗ ҫӳллӗш ӳсетчӗҫ;
Хӑна-вӗрле пур чухне
Ялан симпыл ӗҫетчӗҫ.
Урпасемпе пӑрисем
Касса уҫӑлми пулатчӗҫ.
Тӗрлӗ тырӑ-пулӑпа
Кӗлечӗсем тулатчӗҫ.
Туллине те, вирне те
Темӗн чухлӗ акатчӗҫ,
Вӗсем валли ҫулленех
Тем чул ҫерем ҫӗтетчӗҫ.
Ҫӑва тухсан нумайӗш
Хиртен яла кӗместчӗҫ;
Улт-ҫич ҫула ҫитмесӗр
Лашисене кӳлместчӗҫ.
Сӗлӗ ҫӑнӑх пӗҫерсе
Тип тинкӗле тӑватчӗҫ,
Хӗрӗсене вӑрласа
Инке туса хуратчӗҫ.
Улӑхсенче утисем
Кӑвапаран ӳсетчӗҫ,
Шывӗсенче чӑп-чӑпӑр
Кимӗ-сулӑ ишетчӗ.

Юр юрласа, ташласа
Тăватчĕçĕ юпасем,
Ялтан яла çӳретчĕç
Ташлаттарса упасем.
Уша юпи çумĕнче
Çунатчĕçĕ çуртисем,
Çĕлĕксене хĕстерсе
Кĕл тăватчĕç хуçисем.
Пĕтĕм хурсем пĕçерсе,
Чӳклемесем чӳклетчĕç,
Хăй юпине çын чунĕ
Килет тесе пуплетчĕç.
Кĕрсен, çĕлĕк силлесе
Кĕрӳ салам паратчĕ,
Кĕрӳ ларас вырăна
Хунĕ кĕççе саратчĕ.
Хĕскĕчĕ пек хĕстерчĕç
Тутарĕпе монголĕ,—
Йытă çӳппи вырăнне
Пĕтрĕ Пӳлер пурнăçĕ.
Пĕтĕм Пӳлер çĕршывне
Хупăрласа илчĕçĕ,
Тĕнче пĕтнĕ евĕрлĕ
Çĕр кисретсе килчĕçĕ.
Унăн мĕнпур пурлăхне
Тусан пекех тустарчĕç,
Халăх юнне, куççульне
Çырма пекех юхтарчĕç.
Хуласене, ялсене
Вутпа персе пĕтерчĕç,
Мĕнпур лайăх юр-вара
Çар халăхне çитерчĕç.
Қалама та хăрушă
Усал ĕçсем турĕçĕ;
Çĕр кăкрине юнпала,
Куççульпеле çурĕçĕ.

Пĕрне-пĕри сĕлĕ пек
Çӳререçĕ тураса,
Сехĕрленсе çех тăчĕ
Пĕтĕм тĕнче хăраса.
Пĕтĕм Пӳлер маттурĕ
Пĕр вăхăтсăр пĕтрĕçĕ,
Çитнĕ хĕрипăраça
Чĕрлех çĕрпе витрĕçĕ.
Вĕсен çинчи тăпрана
«Хĕр ту» тесе ят пачĕç,
Уксак Тимĕр çийĕнчен
Ĕмĕр тискер ят ячĕç.
Вăрмансене тарни çех
Сывă тăрса юлчĕçĕ,
Ĕмĕр-ĕмĕр манас çук
Хăруш ĕçсем пулчĕçĕ.
Вут ами те чармарĕ,
Пӳлĕхçи те пӳлмерĕ,
Çĕр çийĕнчен çухалчĕ
Чăваш чаплă Пӳлерĕ.
Кĕслепеле, купăспа
Макра кĕвви каласа,
Патши тарчĕ хăраса,
Улах вырăн шыраса.
Пуçри чухăн çĕлĕкне
Васканипе Пӳлере
Хире манса хăварчĕ,
Хăй пуçне те вилĕмрен
Тарса анчах хăтарчĕ.
Халь те унăн ачисем
Çичĕ тинĕс леш енче:
Аттен чухăн çĕлĕкне
Кайса илесчĕ тесе,
Тăраççĕ, тет, йĕтесе.